# Сăвăç, куçаруçă

**Юрий Семенович Сементер (псевдоним, чăн хушамачĕ Семенов) (2.1.1941, Танăш ялĕ) — поэт, куçаруçă, СССР писательсен Союзĕн членĕ (1973).**

В.РОДИОНОВ

Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищинчен (1969), Чăваш патшалăх университетĕнчен (1974) вĕренсе тухнă.

Çĕрпӳ ВЛКСМ райкомĕнче (1964—66), Çĕрпӳ районĕн "Октябрь çулĕ" хаçат редакцийĕнче (1966—69), Чăваш кĕнеке издательствинче (1971—74), "Ялав" журналăн тĕп редакторĕнче (1974—2005) ĕçленĕ.

Литературăна вăл 1970 çулсен пуçламăшĕнче "Тупа" (1972), "Çĕр çаврăнать" (1974) поэзи пуххисемпе кĕнĕ, вĕсемпе вăл хăйне çепĕç лирик, С.В.Элкер, Н.К.Янкас тата чăвашсен ытти классикĕсем пек кăтартнă. "Çĕр-шывăн хастар ачисем" (1976), "Аван-и, салтак" кĕнекесенче çар тематикине çутатнă, вăл унăн пултарулăхĕн пĕрремĕш тапхăрĕн никĕсне хываннă. "Шетмĕ шывĕ" (1977), "Ниме" (1979), "Пирĕн вăйă карти" (1982), "Чĕнтĕрлĕ кĕпер" (1984), "Уçланкăри палан" (1987) кĕнекесенче вăл талантлă юрăç-лирик пулнине палăртнă. Композиторсемпе пĕрле ĕçлесе çĕршер юрра, 10 ытла вокалпа хореографи сюитине, ораторине, кантантăна, "Акăш" музыкăлла комедие, "Телей кайăкĕ" опера либреттине, "Вăрман ачисем" балета пурнăç панă. Сементер – сюжетлă сăвăсемпе поэмăсене хайлакан ăста. Унăн лирикăлла-эпикăлла "Юлашки çул", "Кăкшăм чăрăшĕ", "Шĕнкрен", "Катюша", "Икĕ талăк чиккинче" хайлавĕсенче хальхи литература геройĕн шалти тĕнчине тĕпченĕ.

XX—XXI ĕмĕрсен чиккинче Сементерĕн поэзийĕнче философи палăрăмĕсем вăйланнă, çакă "Хурапа шурă" (1998), "Хур кайăк Çулĕ" (2002) поэзи пуххисенче уçăмлăн курăнать. 12 ĕмĕрти авалхи вырăс литературин палăкне "Игорь çинчен хунă юрра", А.С.Пушкин, М.Ю.Лермонтов, С.А.Есенин хайлавĕсене, Раççей тата Никама пăхăнман патшалăхсен союзĕн нумай писателĕсен хайлавĕсене чăвашла куçарнă; чăваш театрĕсем вăл вырăс, белорус, пушкăрт, çармăс чĕлхисенчен куçарнă 15 драмăпа комедие лартса панă.

Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1988), Чăваш Республикин халăх поэчĕ (1999). Чăваш комсомолĕн М.Сеспель ячĕллĕ (1983), Пушкăртстан республикин Ф.Карим ячĕллĕ (2002) премисен лауреачĕ. Халăхсен туслăхĕ орденпа (1996), медальпе наградăланă. Чăваш Республикин Красноармейски районĕн хисеплĕ гражданинĕ (2001).